## Çĕнĕ Халалри сăмахсене ăнлантарни

**Аарон** – Моисейăн пиччĕшĕ. Еврей халăхĕ Турăран Моисей урлă Саккун илсессĕн Аарон малтанхи священник пулнă. Саккунпа килĕшӳллĕн Аарон ăрăвĕнчи çынсене çеç священника лартма юранă.

**Авель** – Адампа Евăн ывăлĕ. Ăна Каин ятлă пиччĕшĕ кĕвĕçнипе вĕлернĕ, мĕншĕн тесен Турă Авель парнине йышăннă, унăнне вара йышăнман. Шăллĕне вĕлерсе çылăха кĕнĕшĕн Турă Каина айăпланă: çĕрĕ-шывĕнчен хăваласа ярса, тĕнче тăрăх çапкаланса çӳремелле тунă.

**Авраам** – Христос Çураличчен 2000 çула яхăн маларах çуралнă. Еврейсен тата ытти халăхсен ăру пуçĕ, мăн аслашшĕ. Авраам Турра пĕтĕм чунтан-вартан ĕненнин тĕслĕхĕ пулса тăрать, вăл хăйĕн ывăлне Турра парнелĕхе кӳме те хатĕр пулнă. Турă Авраама тата унăн ăрăвне суйласа илсе пил панă. Авраама Çĕнĕ Халалра Иисус Христоса ĕненекен мĕн пур çынсен ăру пуçĕ, «ĕненӳ ашшĕ» тенĕ.

**Адам** – Турă пултарнă чи малтанхи этем, ун хыççăн Вăл унăн арăмне Евăна пултарнă. Малтанах вĕсем райра пурăннă, каярахпа вара Хăй хушнине итлеменшĕн Турă вĕсене райран хăваласа янă. Вĕсен Авель, Каин, Сиф ятлă ачисем пулнă.

**Аллăмĕш кун уявĕ** – вырма вăхăчĕ вĕçленнĕ ятпа паллă тăвакан уяв. Иудей тĕнĕнчи чи пысăк уявсенчен пĕри, ăна Пасха иртсен аллăмĕш кун уявлаççĕ. Шăпах çавăн чухне, Çăлаканăмăра пăталани (ун хыççăн Вăл чĕрĕлсе тăнă) аллă кун иртсен, апостолсем çине Святой Сывлăш аннă, вара вĕсем хăйсем малтан пĕлмен чĕлхесемпе калаçма тытăннă. Çакă Ырă Хыпара пĕтĕм тĕнчипе ӳкĕтлесе вĕрентме пуçланине пĕлтернĕ. (*Апостол* сăмаха пăхăр.)

**Аминь** – еврейларан куçарсан «чăн, çапла» тени пулать. Кĕлĕсенче, ӳкĕтсенче, апостолсен çырăвĕсенче тата ыттисенче юлашки сăмах вырăнне усă кураççĕ.

**Ангел** – тӳпери ӳт-пӳсĕр пирĕшти; унăн кăмăл-ирĕк, ăс-хакăл, вăй-хăват пур. Ангелсем – Турă пултарнисенчен чи пахисем, Турă хушнипе вĕсем çынсене пулăшаççĕ.

**Апостол** – грекларан куçарсан «янăскер» тени пулать. Апостол – Турă ирĕкне пĕлтерме тата пурнăçлама суйласа илнĕ Христосăн вĕренекенĕ. Ытларах чухне апостол тесе Иисусăн чи çывăх вун икĕ вĕренекенне тата Павела калаççĕ. Ӑна Хуçамăр Хăй тӳпене çĕкленнĕ хыççăн Турăшăн ĕçлесе тăма чĕнсе илнĕ.

Апостолсем Христос вĕрентĕвне пĕтĕм тĕнчипе сарса тата хăйсен ӳкĕчĕсене хăватсем кăтартнипе çирĕплетсе христиансен нумай-нумай ушкăнĕсене никĕсленĕ, вĕсене ертсе пынă.

**Ареопаг** – Афины хулинчи тӳпемлĕ вырăн ячĕ, унта туса ирттернĕ аслă суда та çаплах каланă.

**Ассарий** – Рим империйĕнчи пăхăр вак укçа, динарийĕн 1/16 пайĕ патнелле.

**Вавилон** – хальхи Ирак çĕр-шывĕнчи авалхи хула. Авалхи Халал саманинче Вавилон империйĕ еврей халăхĕн чи хаяр тăшманĕ пулнă. Çĕнĕ Халалра «Вавилон» – Турра хисеплеменнин, Турра курайманнин символĕ, шуйттан патшалăхĕ. Тĕслĕхрен, Апостолсен Ĕçĕ-хĕлĕ Кĕнекере тата Апокалипсис Кĕнекере Вавилона çапла хак панă.

**Валаам** – Моисей вăхăтĕнчи пророк. Моав патши Валак ăна Израиль халăхне ылханма хушнă, анчах та Турă Валаама çакна тума чарнă.

**Вăхăт шучĕ** – авалхи Израиль çыннисем çĕнĕ кун каçхине пуçланать тесе шутланă. Хĕвел ансан хĕвел тухичченхи çĕрлехи вăхăт тăватă хурал черетне пайланнă, хĕвел тухсан хĕвел аничченхи кăнтăрлахи вăхăт вун икĕ сехете пайланнă.

**Веельзевул** – усалсен пуçлăхĕн, шуйттанăн, пĕр ячĕ.

**Вун иккĕшĕ** – *Апостол* сăмаха пăхăр.

**Галилея** – Палестинăн çурçĕр пайĕнчи çĕрĕ-шывĕ. Нумай ĕмĕрсем хушши çак çĕр-шывпа урăх патшалăхсем хуçаланнă; Христос вăхăтĕнче кунта еврейсем те, урăх халăх çыннисем те пурăннă. Унти чылай еврей ытти халăхсемпе хутăшса кайнă, апла пулин те вĕсем Моисей тĕнне тытса пынă. Иудейăра пурăнакан еврейсем вĕсем çине тĕттĕм кĕтесре пурăнакансем çине пăхнă пек мăнкăмăллăн пăхнă. Иисус Христосăн ачалăхĕпе çамрăклăхĕ Галилейăри Назарет хулинче иртнĕ.

**Гоморра** – *Содомпа Гоморра* сăмахсене пăхăр.

**Давид** – Израилĕн чи чаплă патши, вăл патшара Христос Çураличченхи 1000-мĕш çулсенчен пуçласа ларнă. Çĕр-шыва ăслăн ертсе пырса, çар ĕçне питĕ аван пĕлсе вăл Израильтен аслă патшалăх туса хунă, Иерусалима вара çав патшалăхăн тĕп хули тунă. Турă ирĕкне пурнăçласа Давид тăнăçлăхпа тĕрĕслĕхшĕн çуннă. Вăл псаломсем – Турра мухтакан юрăсем – нумай хывнă. Пророксем Христос çураличчен чылай малтан Вăл Давид йăхĕнчен тухасса каланă.

**Диакон** – грекларан куçарсан «пулăшакан» тени пулать. Малтанхи христиансен ушкăнĕнче диаконсем ытларах хуçалăх ыйтăвĕсемпе ĕçленĕ: тĕслĕхрен, чухăнсене панă пулăшăва (укçа-тенкĕ, апат-çимĕç т. ыт. те) валеçекенсем пулнă.

**Диаконисса** – хĕрарăм-диакон. (*Диакон* сăмаха пăхăр.)

**Динарий** – Рим империйĕнчи кĕмĕл укçа. Тара тытнă çыннăн пĕр кунлăх ĕç укçи пĕр динарие яхăн пулнă.

**Драхма** – Грецири кĕмĕл укçа. Вăтамран Рим империйĕнчи динарийпе тӳр килет. (*Динарий* сăмаха пăхăр.)

**Ева** – *Адам* сăмаха пăхăр.

**Евангели** – авалхи грек чĕлхинче ку сăмах «Ырă Хыпар» тенине пĕлтерет. Ырă Хыпар вăл – Çăлаканăмăр Иисус Христос çинчен, Вăл çурални çинчен, Турăшăн тăрăшни çинчен, Унăн вĕрентĕвĕ çинчен, вилĕмĕ çинчен тата вилĕмрен чĕрĕлсе тăни çинчен калакан хыпар. Çăлаканăмăр çинчен çырса кăтартнă тăватă кĕнекене каярахпа çапла калама пуçланă.

**Евнух** – кастарнă арçын. Ĕлĕк-авал евнухсем патша гаремĕсене хураллана. Тепĕр чухне вĕсем патша таврашĕнче самаях пысăк витĕм кӳрекен çынсем, патша çумĕнчи аслă улпутсем пулса тăнă.

**Епископ** – грекларан куçарсан «упраса, пăхса тăракан» тенине пĕлтерет. Малтанхи христиансен ушкăнĕнче вĕсене пресвитер тесе те каланă. (*Пресвитер* сăмаха пăхăр.)

**Иаков** – Исаакпа Ревекка ывăлĕ, Авраам мăнукĕ. Иаковăн Исав ятлă йĕкĕреш пĕртăванĕ пулнă. Исав кăшт маларах çуралнă пулин те, Иаков, хăйне Турă суйласа илнĕ пирки, малтанхи ывăлăн тивĕçĕсене тата ашшĕн пилне илнĕ. Иаковăн вун икĕ ывăл пулнă: Рувим, Симеон, Левий, Иуда, Дан, Неффалим, Гад, Асир, Иссахар, Завулон, Иосиф, Вениамин – каярахпа

вĕсенчен еврей халăхĕн вун икĕ сыпăкĕ (йăхĕ) пулса кайнă. Турă Иакова çĕнĕ ят панă – Израиль, çак ят унран пулса кайнă еврей халăхĕн ячĕ пулса тăнă.

**Иеремия** – Израилĕн аслă пророкĕ, вăл Христос Çураличченхи 627-580-мĕш çулсенче Турăшăн ĕçлесе тăнă. Иеремия Турăран пăрăнса кĕлеткесене пуççапма пуçланă еврейсене питĕ вăйлăн питленĕ, Иерусалим çыннисем Турра хисеплеменшĕн çак хулана аркатасса малтанах каласа хунă. Çавăншăн ăна тăтăшах хĕсĕрленĕ.

**Иерусалим** – Израиль патшалăхĕн тĕп хули. Çак хулара мĕн пур еврей сума сăвакан Турă Çурчĕ пулнă. Каярахпа, малтанхи пĕрлĕхлĕ патшалăх Çурçĕрти патшалăха (вăл Израиль ятлах пулнă) тата Кăнтăрти патшалăха (Иуда, е Иудея) пайланса кайсан, Иерусалим Кăнтăрти патшалăхăн тĕп хули пулса тăнă.

**Иисус Навин** – Моисей пурăннă вăхăтра унăн пулăшаканĕ пулнă, Моисей вилсессĕн вара ун вырăнне юлнă, Израиль çыннисен çулпуçĕ пулса тăнă. Шăпах та вăл ертсе пынипе Израиль çыннисем хăйсене Турă шантарнă çĕре – Ханаан çĕрне – туртса илнĕ.

**Илия** – Израилĕн аслă пророкĕ. Вăл Израилĕн Турра пачах та хисеплемен патши Ахав вăхăтĕнче пурăннă, патшана Турă енне çавăрăнма ӳкĕтленĕ. Хăйĕн тӳрĕлĕхĕшĕн вăл чĕрĕллех тӳпене илĕннĕ. Çăлакан килес умĕн Ун валли çул хатĕрлемешкĕн Илия çĕр çине тавăрăнасса еврейсем ĕненнĕ.

**Император** – Рим империйĕнчи чи аслă пуçлăх. Ăна Рим империне кĕрекен мĕн пур çĕрсен пуçлăхĕсемпе патшисем (тĕслĕхрен, Пилат тата Ирод) пăхăнса тăнă.

**Иоиль** – Израилĕн аслă пророкĕ. Иоиль хăçан пурăнни паллах мар, анчах вăл Хуçа Туррăмăрăн кунĕ килесси çинчен нумай хутчен пророкла каланă. Çав кун тĕнчене суд тумашкăн Турă Суйласа илни тепĕр хут çĕр çине килесси çинчен те малтанах пĕлтернĕ. Чылай ĕмĕр иртсессĕн Петр апостол Иисус Христос Хуçамăр çинчен каланă чухне унăн сăмахĕсемпе усă курнă.

**Иона** – Израилĕн аслă пророкĕ. Иона кит ăшĕнче виçĕ кун та виçĕ каç пулнă; Христос Хăйĕн ӳт-пĕвĕпе те çапла пулассине малтанах каласа хунă. Тата Çĕнĕ Халалра Иона хăйĕн ӳкĕчĕпе Турра хисеплемен Ниневи çыннисене ӳкĕнтерни çинчен асăннă.

**Иосиф** – Çĕнĕ Халалра ку ятлă темиçе çынна асăннă, вĕсенчен паллăраххисем çаксем: 1) Иисус Христос Хуçамăр Амăшĕн, Мариян, упăшки. 2) Иаковăн вун икĕ ывăлĕнчен пĕри. (*Иаков* сăмаха пăхăр.) Пĕртăванĕсем ăна кĕвĕçнипе Египета чуралăха сутнă; каярахпа Иосиф çак çĕр-шывăн пуçлăхĕ пулса тăнă. 3) Иисус Хуçамăра тирпейлесе пытарнă Аримафея хулинчи Иосиф.

**Ирод** – пĕр династири темиçе патша ячĕ: 1) Аслă Ирод: Христос Çураличчченхи 40-мĕш çултан пуçласа Христос Çуралнă хыççăн 4-мĕш çулччен пĕтĕм Палестина пуçлăхĕ пулнă. Иисус Хуçамăр çуралнă хыççăнах Вифлеемри ачасене вĕлерсе тухма шăпах вăл хушнă. 2) Ирод Антипа, Аслă Иродăн ывăлĕ: 4-39-мĕш çулсенче Галилея пуçлăхĕ пулнă. Вăл Шыва кĕртекен Иоана тытма тата вĕлерме хушнă; Христоса суд тунă чухне вăл Унпа кĕске вăхăтлăха курнăçнă. 3) 1-мĕш Ирод Агриппа, Аслă Иродăн мăнукĕ: 41-44-мĕш çулсенче Палестина пуçлăхĕ пулнă. Христиансене тискеррĕн хĕсĕрлекенĕ. 4) 2-мĕш Ирод Агриппа, 1-мĕш Ирод Агриппа ывăлĕ, Павел апостол ун умĕнче сăмах каланă; 70-мĕш çулсемччен Палестинăн тĕрлĕ пайĕсен пуçлăхĕ пулнă, кайран Рима куçса кайнă.

**Исаак** – Авраампа (*Авраам* сăмаха пăхăр) Сарра ывăлĕ. Вăл Турă хăйĕн ашшĕпе тунă килĕшĕве еткерлĕхе илме тивĕç пулнă.

**Исав** – Исаакăн аслă ывăлĕ, Иаковпа йĕкĕрешскер, унран кăшт маларах çуралнă. Анчах та пĕррехинче вăл, выçса кайнăскер, малтанхи ывăлăн тивĕçĕсене Иаков шăллĕне ясмăк яшкилле сутса янă. (*Иаков* сăмаха пăхăр.)

**Исаия** – Израилĕн аслă пророкĕ, вăл Христос Çураличчченхи VIII ĕмĕрте пурăннă. Унăн кĕнекинче Христос килесси çинчен, Унăн асапĕсем çинчен, вилĕмĕ тата вилĕмрен чĕрĕлсе тăни çинчен пророкла каланă.

**Иссоп** – Авалхи Халал вăхăтĕнчи йăла-йĕркере сирпĕтме-сапма усă курнă сунчăклă ӳсен-тăран.

**Иуда** – Çĕнĕ Халалра ку ятлă темиçе çынна асăннă, вĕсенчен паллăраххисем çаксем: 1) Авалхи Халалри Иаковăн вун икĕ ывăлĕнчен пĕри. Унăн ăрăвне «иудейсем» (*Иудейсем* сăмаха пăхăр) теме пуçланă, вĕсем пурăнакан Израиль çĕрне Иудея тенĕ. Давид патша та, Иисус Христос Хуçамăр та Иуда ăрăвĕнчен пулнă. 2) Христосăн вĕренекенĕ, çавскер кайран Иисуса сутнă.

**Иудейсем** – чăн малтанах Иуда (*Иуда* сăмаха пăхăр) ăрăвĕнчи çынсене çапла каланă. Каярахпа çак ят «еврей» е «Израиль çынни» сăмахсен синонимĕ пулса тăнă пулин те, «иудейсем» тесе еврей халăхне мар, еврей тĕнне тытса пыракансене калассипи йăлана кĕнĕ. Иоанн пĕлтернĕ Ырă Хыпарта «иудейсем» тесе тăтăшах еврей тĕнĕн ертӳçисене каланă.

**Иудея** – Израилĕн кăнтăр пайĕнчи çĕрĕ. Каярахпа «Иудея» тесе Кăнтăрти патшалăха калама пуçланă. Ку патшалăх малтан пĕрлĕхлĕ пулнă Израиль патшалăхĕ пайланса кайсан йĕркеленнĕ. (*Иуда, Иерусалим* сăмахсене пăхăр.)

**Каин** – *Авель* сăмаха пăхăр.

**Кĕлĕ чатăрĕ** – еврейсен сăваплă вырăнĕ, куçарса çӳремелли пысăк чатăр. Израиль çыннисем пуш хирте çӳренĕ вăхăтра çав чатăрта Турра пуççапнă. Кĕлĕ чатăрне Турă Моисея панă ĕлкепе тунă пулнă. Чи шалти пӳлĕмĕнче вунă пил-хушу (*Пил-хушу* сăмаха пăхăр) çырнă чул хăмасем упранакан арча ларнă. Çав чул хăмасене Турă Моисея Синай тăвĕ çинче панă. Соломон Иерусалимри Турă Çуртне тăвиччен еврейсем кĕлĕ чатăрĕнче Турра пуççапнă, Ăна парне кӳнĕ.

**Кодрант** – Рим империйĕнчи вак укçа, динарийĕн (*Динарий* сăмаха пăхăр) 1/64-мĕш пайĕ патнелле.

**Корей** – Моисейпа Аарона хирĕç пăлхав çĕкленĕ Израиль çынни. Турă ăна айăпланă: Корейпа унăн майлисене çĕр çăтнă.

**Ладан** – хаклă йышши сăмала, ăна çунтарсан ырă шăршăллă тĕтĕм тухать. Ладана ятарласа тунă парне вырăнĕнче çунтарни – Турра парне кӳнин пĕр тĕсĕ.

**Левит** – Левий сыпăкĕнчи (ăрăвĕнчи) çын. Левий Иаков (*Иаков* сăмаха пăхăр) ывăлĕ пулнă. Левитсене Турăшăн ĕçлесе тăма уйăрса лартнă. Аарон тăхăмĕнчи левитсем священникра ĕçленĕ, ыттисем кĕлĕ вăхăтĕнче священниксене пулăшса тăнă.

**Лот** – Авраамăн иккĕмĕш сыпăкри тăванĕ, вăл Содом (*Содомпа Гоморра* сăмахсене пăхăр) хулинче пурăннă. Турă çак хулана пĕтерме шутланă та Лот патне ангелсем ярса ăна хуларан çавăрăнса пăхмасăр тухса кайма хушнă. Лот арăмĕ, итлемесĕр, çаврăнса пăхнă та тăвар юпа пулса тăнă.

**Маннă** – Израиль çыннисем пуш хирте хĕрĕх çул хушши çӳренĕ чухне Турă вĕсем валли тӳперен антарнă çимĕç.

**Мелхиседек** – Салим патши тата священник. Авраам вăрçăран çĕнтерсе таврăннă чухне вăл ăна хирĕç тухса кĕтсе илнĕ, пилленĕ. Авраам ăна вăрçăра çĕнсе илнĕ пурлăхăн вуннăмĕш пайне панă.

**Мессия** – еврейларан куçарсан «Çу сĕрсе палăртни (Турă Суйласа илни)» тени пулать. *Христос* сăмаха пăхăр.

**Мина** – Грецири укçа виçи (0,5 кг кĕмĕл патнелле), хаклăхĕпе вăл 100 драхмăпа танлашнă. (*Драхма* сăмаха пăхăр.)

**Мирă** – ырă шăршăллă питĕ хаклă çу. Тĕрлĕ çĕрте усă курнипе пĕрлех çак çупа вилесене пытарма хатĕрленĕ чухне те усă курнă.

**Моисей** – Израилĕн чи аслă пророкĕ. Турă Израиль халăхне Египетран илсе тухнă чухне тата еврейсем пуш хирте хĕрĕх çул хушши çӳренĕ чухне Турă чĕнсе илнипе вăл халăха ертсе пынă. Шăпах Моисей урлă Турă Хăйĕн халăхне, еврейсене, халал тата саккун панă. Çав саккуна еврейсен çирĕп тытса пымалла пулнă. (*Саккун* сăмаха пăхăр.)

**Налук пухакан** – Рим пуçлăхĕсем валли хырçă-налук пухакансем, халăхра вĕсене пусмăрçă сăнарĕпе танлаштарнă. Налук пухакансем Рим империйĕн аллине кĕрсе ӳкнĕ çĕрсенче Римшăн ĕçлесе тăнă. Халăха хĕстернĕрен, çаратнăран çынсем вĕсене курайман.

**Ниневи** – ĕлĕк-авал хăватлă пулнă Ассири патшалăхĕн тĕп хули. Çылăх ăшне путнă Ниневи çыннисене ӳкĕнме чĕнмешкĕн Турă Иона пророка янă. Иона ӳкĕтне итлесе Ниневи çыннисем ӳкĕннĕ, вара çав хула Турă айăплавĕнчен хăтăлса юлнă.

**Ной** – çĕр çинчи халăх Турă ирĕкне пăхăнми пулнă чухне Ной Турра пĕтĕм чунтан парăннă çын пулнă. Çавăнпа та Турă, Хăй пултарнă этемсене пурне те шыв илтерсе пĕтерме шутласан, Ноя пысăк карап тума хушнă. Ной çав карап çине хăйĕн пĕтĕм кил-йышĕпе ларнă та вилĕмрен çăлăннă.

**Осанна** – еврейларан куçарсан «çăлсамччĕ», авалхи еврейсен кĕлĕре каланă сăмахĕ, вăл савăннине тата ырланине пĕлтернĕ. Ашак çине ларса Иерусалима кĕрекен Иисус Христоса еврейсем çапла кăшкăрса кĕтсе илнĕ.

**Пасха** – иудейсен тĕп уявĕсенчен пĕри. Еврейсем ăна Египет чуралăхĕнчен хăтăлнине паллă туса çуркунне уявланă. Пасха хыççăн Тутлăлла пĕçернĕ çăкăр уявĕ пуçланнă: пĕр эрне хушши

еврейсем йӳҫӗтмесӗр пӗҫернӗ ҫӑкӑр кӑна ҫинӗ (Ҫӗнӗ Халалра Пасха тата Тутлӑлла ҫӑкӑр уявӗ пӗр уяв шутланать). Иисус Христос Хуҫамӑра пӑталани тата Вӑл чӗрӗлсе тӑни Пасха кунӗсенче пулса иртнӗ, ҫавӑнпа та Пасха (Мункун) христиансен тӗп уявӗ – Христос вилӗмрен чӗрӗлнине палӑртакан уяв – пулса тӑнӑ.

**Пил-хушу** – кӗскен пӗтӗмлетсе каланӑ Турӑ панӑ тӗп йӗрке. Турӑ Моисей урлӑ еврейсене вунӑ тӗп пил-хушу панӑ, халӑхӑн ҫав пил-хушусене ҫирӗп тытса пымалла пулнӑ.

**Пресвитер** – грекларан куҫарсан «асли» тени пулать. Малтанхи христиансен ушкӑнӗнче пресвитерсем чун-чӗм ертӳҫин тата йӗркене пӑхса тӑраканӑн ӗҫне пурнӑҫланӑ. Пресвитера апостолсем лартнӑ е халӑх суйланӑ, анчах та яланах алӑ хурас йӑлана туса ирттернӗ: апостолсем (е вӗсен ӗҫне тӑсакансем) кӗлӗ туса пулас пресвитер ҫине алӑ хунӑ, ҫапла майпа ӑна ӑнӑҫлӑ ӗҫлемешкӗн Святой Сывлӑшӑн ырӑлӑхне панӑ. Ялан тенӗ пекех, ӗненекен ушкӑнра темиҫе пресвитер пулнӑ, вӗсем ушкӑнӑн ӗҫне канашласа йӗркелесе пынӑ.

**Претори** – Рим лартнӑ пуҫлӑхӑн тивӗҫӗсене туса тӑмалли вырӑнӗ. Преторире тӗрлӗ ҫурт-йӗр, картиш тата тӗрме пулнӑ.

**Притвор** – Иоанн пӗлтернӗ Ырӑ Хыпарта тата Апостолсен Ӗҫӗ-хӗлӗнче Соломон притворне асӑннӑ. Притвор тесе тӑррине витнӗ колоннадӑна каланӑ.

**Пророк** – Турӑ Хӑйӗн ирӗкне ҫынсене пӗлтермешкӗн суйласа илнӗ ҫын. Турӑ Сывлӑшӗн витӗмӗпе калаҫса, пророксем малашне мӗн пулассине кӑна уҫса паман, питлесе те ӳкӗтлесе, ҫынсене ҫылӑхсенчен ӳкӗнме, Турӑ енне ҫавӑрӑнма чӗннӗ. Пророксем Христос ҫураличчен чылай малтан ҫӗр ҫинчи пурӑнӑҫӗнче Унпа мӗн-мӗн пулассине пӗлтернӗ. Авалхи Халалра пророксем ҫырнӑ кӗнекесем нумай, – вӗсене кӗнеке ячӗсенченех пӗлме пулать. Ҫӗнӗ Халал хыҫҫӑнхи Чиркӳсенче те пророкла каланисем пулнӑ.

**Раав** – Иерихон хулинче пурӑннӑ аскӑн хӗрарӑм. Иисус Навин ертсе пынипе еврейсем ҫак хулана тытса илме шухӑшланӑ. Раав еврей сӑнавҫисене хӑй патӗнче пытарса хӑварнӑ. Ҫавӑншӑн вара, еврейсем хулана ҫӗнсе илсе халӑхне пӗтерсен, Раава чӗрӗ хӑварнӑ.

**Равви** – еврейларан куҫарсан «аслӑскерӗм», «вӗрентекен» тени пулать. Еврейсем тӗн вӗрентӳҫисене ҫапла хисеплесе каланӑ.

**Ревекка** – Исаак (*Исаак* сăмаха пăхăр) арăмĕ, Иаковпа Исав амăшĕ. Иакова ашшĕн пилне илме шăпах вăл пулăшнă.

**Саддукейсем** – Иисус Христос вăхăтĕнчи еврейсен тĕн ушкăнĕсенчен пĕри. Саддукейсем саккуна питĕ çирĕп тытса пынă, анчах та, фарисейсемпе танлаштарсан, сăмах вĕççĕн çӳрекен халапсене тата пророксем çырнисене, вилнисем чĕрĕлсе тăрассине, ангелсемпе усал сывлăшсем пуррине йышăнман. Синедрионра лараканСенчен ытларахăшĕ саддукей пулнă.

**Саккун** – Турă Хăйĕн халăхне туса панă йĕркесен пуххи. Çав саккуна Вăл Моисея Синай тăвĕ çинче панă. Саккун икĕ пайран тăнă: вунă тĕп пил-хушуран (*Пил-хушу* сăмаха пăхăр) тата кулленхи пурăнăçра еврейсен хăйсене епле тытмалли çинчен каланисенчен. Саккун чи малтанах Турă халăхне чун-чĕм тата ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен упраса хăварма, пĕтĕм еврей халăхĕ кĕтекен Турă Суйласа илни киличчен ăна Турăран пăрăнтармасăр илсе пыма кирлĕ пулнă.

Саккуна Библин малтанхи пилĕк кĕнекинче çутатса панă, çав пилĕк кĕнекене тата Моисей (*Моисей* сăмаха пăхăр) кĕнекисем тесе те калаççĕ.

**Саккун вĕрентӳçисем** – Моисей саккунне лайăх пĕлекен çынсем. Саккун вĕрентӳçисем саккун текстне çĕнĕрен çыра-çыра илнĕ (текста вĕсем нимĕнле тӳрлетӳсем те кĕртмен), халăх саккуна епле тытса пынине тимлĕн асăрхаса тăнă, еврей халăхне саккун йĕркисене вĕрентнĕ.

**Самари** – Израилĕн варринче вырнаçнă çĕр. Иисус Христос вăхăтĕнче Самарире Азирен куçарса килнĕ халăхсемпе хутăшса кайнă еврейсен тăхăмĕсем пурăннă. Самари çыннисен тĕнĕ иудейсен тĕнне çывăх пулнă пулин те, кăштах уйăрăлса тăнă. Çак икĕ халăх пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнман.

**Самуил** – еврейсен пророкĕ, Израилĕн (Христос Çураличчченхи 1130-мĕш çулсем патнелле) юлашки аслă тӳри. Израильте, аслă влаçа Турă суйласа илнĕ тӳресем тытса пынă çĕр-шывра, Самуил хыççăн влаç патшасен аллине куçнă. Турă хушнипе Самуил чи малтанхи патшана – Саула – патшана ларма çу сĕрсе палăртнă.

**Сарра** – Авраам (*Авраам* сăмаха пăхăр) арăмĕ. Саррăн ача пулман, ватăлсассăн тин, Турă сăмах панипе, унăн Исаак ятлă ывăл çуралнă.

**Сӑваплӑ, сӑвапли** – Библире ку сӑмах чи малтанах Турра тата Ӑна валли ятарласа уйӑрнӑ мӗнпурӑшне: Турӑ Çуртне, Турра кӗлтунӑ чухне усӑ куракан япаласене, Ӑна пуççапакан çынсене (Авалхи Халалра – Израиль халӑхне, Çӗнӗ Халалра – Чиркӗве) пӗлтерет. Унсӑр пуçне, çак сӑмахах харкам хӑйӗн чун-чӗм тасалӑхӗпе пахалӑхӗн чи çӳллӗ шайне те пӗлтерме пултарать.

**Сӑваплӑ Çырни** – е Библи – Турӑ суйласа илнӗ çынсем, пророксемпе апостолсем, Турӑ Сывлӑшӗ хавхалантарнипе çырнӑ кӗнекесем. Çырни Авалхи тата Çӗнӗ Халал пайсенчен тӑрать. Çӗнӗ Халала (I ӗмӗр варри) çыриччен «Çырни» тесе Авалхи Халал кӗнекисене каланӑ.

**Синагога** – еврейсен пӗрле кӗлӗ тумалли, Сӑваплӑ Çырнине вуламалли тата вӗренмелли пухӑвӗ; çакнашкал пухусем иртекен çурта та синагога тенӗ. Еврейсем пурӑнакан кашни хуларах синагога пулнӑ.

**Синай** – хальхи Египет çӗрӗнчи ту, вӑл Вӑта çӗр тинӗсрен кӑнтӑралла вырнаçнӑ. Çак ту çинче Турӑ Моисея саккун панӑ. (*Саккун* сӑмаха пӑхӑр.)

**Синедрион** – еврейсен аслӑ канашӗ. Канашра çитмӗл çынна яхӑн ларнӑ. Вӗсем патшалӑхри паллӑ çынсем пулнӑ: халӑх пуçлӑхӗсем, священниксем, саккун вӗрентӳçисем т. ытт. те. Канаша аслӑ священник ертсе пынӑ. Синедрион аслӑ суд тумалли вырӑн пулнӑ, унта политикӑпа тӗнӗн чи кирлӗ ыйтӑвӗсене те сӳтсе явнӑ.

**Смирна** – *Мирӑ* сӑмаха пӑхӑр.

**Смоква** – Палестинӑра ӳсекен смоква йывӑççин, е фига йывӑççин çимӗçӗ (инжир).

**Содомпа Гоморра** – икӗ хула ячӗ. Çӗнӗ Халалра ку хуласем Турра хисеплеменнин тӗслӗхӗ пулса тӑраççӗ. Вӗсенче пурӑнакансен çылӑхӗсемшӗн Содомпа Гоморра çине вутлӑ кӳкӗрт çумӑрӗ ярса Турӑ çак хуласене тӗппипех пӗтернӗ. (*Лот* сӑмаха пӑхӑр.)

**Соломон** – Давид ывӑлӗ, Израиль патши тата пысӑк ӑсчах. Вӑл патшара ларнӑ чухне Израиль аталанса кайнӑ. Шӑпах Соломон патшара ларнӑ чухне Иерусалимри Турӑ Çуртне тунӑ; унччен еврейсем Турра чатӑрта пуççапнӑ. (*Чатӑр* сӑмаха пӑхӑр.)

**Статир** – Грецири кӗмӗл укçа, тӑватӑ драхмӑпа танлашнӑ. (*Драхма* сӑмаха пӑхӑр.)

**Çăлакан** – *Христос* сăмаха пăхăр.

**Çĕрпӳ, пинпӳ** – Рим çарĕн офицерĕсем; çĕрпӳ – çĕр салтак пуçлăхĕ, пинпӳ – пин салтак пуçлăхĕ.

**Çӳлти Патшалăх** – *Турă Патшалăхĕ* сăмаха пăхăр.

**Çылăх** – Турă пил-хушăвĕсене пĕлсе тăнă çинчех е пĕлмесĕр пăсни; Турра итлеменни тата пăхăнманни. Чи малтан Адампа Ева çылăха кĕнĕ; вĕсем çылăха кĕнĕ хыççăн пĕтĕм этемлĕх çылăх тыткăнне кĕрсе ӳкнĕ, этем вилĕмлĕ пулса тăнă.

**Талант** – Грецири йывăрăш виçи (30 кг ытларах). Çĕнĕ Халалра ку сăмахпа ытларах чухне талант кĕмĕл пĕлтерĕшпе усă курнă, хакĕпе вăл 6000 драхмăпа танлашать. (*Драхма* сăмаха пăхăр.)

**Тупăклăх** – вилнĕ çынна пытармалли вырăн. Еврейсем ытларах чухне пытармалли çĕр хăвăлне ту хысакне алтса тунă.

**Турă Патшалăхĕ** – ку сăмах çаврăнăшĕ Турăпа çын хушшинчи хутшăнусем çинчен калать. Çынсем Ăна хăйсен Патши тесе йышăнаççĕ тата Унпа хутшăнса пурăнаççĕ. Турă Патшалăхĕн тулли пĕлтерĕшĕ Турă Суйласа илни тепре килсессĕн çеç усăлать. Турă халăхĕн тăшманĕсене çĕнтерĕç, малтанхи тĕнче пĕтет, ун вырăнне çĕнĕ тĕнче пулать. Çĕнĕ тĕнче ĕмĕрлĕх килĕшӳлĕхпе тулĕ, унта нимĕнле усал та пулмĕ. Анчах та Турă Патшалăхне малашлăхра кăна курмалла мар, вăл халех пуçланать. Çынсем хушшинче юратупа килĕшӳ пур çĕрте, çынсем Турă ирĕкĕ хыççăн кайнă çĕрте Турă Патшалăхĕ пуçланнă та ĕнтĕ. Турă Патшалăхĕ – Иисус Христос, Шыва кĕртекен Иоанн (*Шыва кĕртекен Иоанн* сăмаха пăхăр), апостолсем ӳкĕтлесе вĕрентнин тĕп теми.

**Турă Путекки** – Иоанн пĕлтернĕ Ырă Хыпарта Иисус Христос Хуçамăра çапла каланă. Ку ят Иисуса этемлĕхĕн çылăхĕсемшĕн Турра парнелĕхе кӳнине кăтартса парать. Тата çакна каламалла: Авалхи Халал саманинче ытларах чухне сурăх е качака путеккисене Турра парнелĕхе кӳнĕ. Пĕррехинче, çĕрле, Турă Египет çыннисен малтан çуралнă ачисене пурне те пĕтернĕ, еврей çемйисене вара пӳрт алăкĕн суллисене путек юнĕпе сĕрсе тухма хушнă. Çапла Турă Египет çыннисене тавăру янă чухне еврей кил-çурчĕсене кĕмен, юнашар иртсе кайнă. Çавăн хыççăн тин фараон еврейсене Египет тыткăнĕнчен хăтарма килĕшнĕ.

**Турă Суйласа илни** – *Христос* сăмаха пăхăр.

**Турă Сывлăшĕ, Святой Сывлăш** – (вырăсла: Дух Божий/Святой) Туррăн мĕн пур пахалăхĕсем: пурне те пĕлни, пур çĕрте те пулни, вилĕмсĕрлĕх, аслăран та аслă хăватлăх – Турă Сывлăшĕн те пур. Святой Сывлăш Иисус Христоса ĕненекенсем çине анать, суйласа илнисене вара пророк пултарулăхне, хăват тăвас пултарулăха т. ыт. те парать. Турă Сывлăшĕ çинчен вĕрентни Иисус Христос сăмахĕсенче тата пророксемпе апостолсем каланисенче пур.

**Турă Çурчĕ** – Израилĕн тĕп хулинче Иерусалимра пулнă. Турра пуççапмашкăн тата Ăна парне кӳмешкĕн кунта пĕтĕм тĕнчери еврейсем пырсах тăнă. Христос Çураличченхи X ĕмĕрте Соломон лартнă Турă Çурчĕ Моисей вăхăтĕнчененех пыракан Кĕлĕ чатăрне ылмаштарнă. Кĕлĕ чатăрĕнчи пекех, Турă Çуртĕнче Тасаран таса текен шалти пӳлĕм пулнă, унта пил-хушу арчи упраннă. Турра ятарлă кĕлĕ тума çав пӳлĕме çулталăкра пĕр хут аслă священникăн кăна кĕме юранă. 70-мĕш çулта, Иисус Христос Хуçамăр малтан каласа хунă пекех, Турă Çуртне Рим çарĕсем тĕппипех аркатнă.

**Турă Ывăлĕ** – *Христос, Этем Ывăлĕ* сăмахсене пăхăр.

**Урăх халăх çыннисем** – Иисус Христос вăхăтĕнче еврей маррисене пурне те çапла чĕннĕ, мĕншĕн тесен вĕсем Пĕртен-пĕр Турра ĕненмен. Анчах та Ырă Хыпара иудей маррисем хушшинче те сарма пуçăнсан, вĕсем питĕ йышлăн чăн Турă енне çавăрăнсан, «урăх халăх çыннисем» тесе кĕлеткесене пуççапакан халăхсене калама пуçланă.

**Ӳт кастарни** – Турă Израиль халăхне панă халалăн палли. Çуралнă хыççăн саккăрмĕш кунне кашни арçын ачаннех ӳтне кастарнă. Ӳт кастарас йăлана чи малтан туса ирттерекенни Авраам пулнă: Турă хушнипе вăл хăйĕн Иаков ывăлĕн ӳтне кастарнă. Израиль çыннисем çак йăла-йĕркене пĕлмен ытти халăх çыннисене хăш-пĕр чухне йĕрĕнсе «ӳт кастарманнисем» тенĕ.

**Фарисейсем** – Иисус Христос вăхĕтĕнчи еврейсен тĕн ушкăнĕсенчен пĕри. Фарисейсем саккун йăли-йĕркине тата ĕмĕрсем хушшинче ун çумне хушнă ытти йĕркесене питĕ çирĕп тытса пынă. Фарисейсем хăйсене ыттисенчен уйрăм çынсем тесе шутланă, хăйсем Турра чунтан парăннине çын умĕнче кăтартма тăрăшнă.

**Халал** – Библире Турă çынсемпе тунă килĕшĕве çапла каланă. Синай тăвĕ çинче Турă Моисей урлă пĕтĕм еврей халăхне халал панă. Турă еврейсене пил пама, мĕн пур тăшмансенчен упрама сăмах панă. Çав хушăрах еврейсен те Ăна чунтан парăнмалла, саккунра (*Саккун* сăмаха пăхăр) çырнă Унăн ирĕкне пурнăçласа парăнмалла пулнă. Çакăн çинчен Авалхи Халал кĕнекисенче – Библин малтанхи пайĕнче – каласа панă. Малтанхи кивĕ, авалхи халал çĕнĕ халалпа ылмашнă. Çак Халала Иисус Христос Хăйĕн Юнĕпе тата вилĕмрен чĕрĕлсе тăнипе çирĕплетнĕ. Халĕ ĕнтĕ Христоса ĕненсе Вăл вĕрентнĕ пек пурăнакансем пурте, кирек епле халăх çынни пулсассăн та, Турă халăхĕ пулса тăраççĕ. Çакăн çинчен Çĕнĕ Халал кĕнекисенче – Библин иккĕмĕш пайĕнче – каласа панă.

**Христос** – грекларан куçарсан «Çу сĕрсе палăртни», урăхла каласан «Турă Суйласа илни» тени пулать. Çакă авалхи йăла-йĕркепе – священника е патшана лартнă чухне вĕсен пуçне олив çăвĕ сĕрессипе – çыхăннă. Ку ĕнтĕ çу сĕрсе палăртнă çынсем хăйсен тивĕçне туса пыма Турă Сывлăшĕн ырăлăхне илнине пĕлтернĕ. Турă ĕлĕк-авалах пророкĕсем урлă еврей халăхне Хăй Суйласа илнине яма сăмах панă. Вăл вара Израиле тăшмансенчен хăтарĕ, ăна малтанхи аслăлăхне тавăрса парĕ тата ĕмĕр-ĕмĕр тĕнче Патши пулĕ тесе шантарнă. Турă Суйласа илни – Иисус Христос Хуçамăр. Вăл çĕр çине килсе пĕтĕм этемлĕхе çылăхпа вилĕм тыткăнĕнчен хăтарнă.

**Хуçа, Хуçамăр** – аслăрах çынсене (вĕрентекене, пуçлăха тата ыттисене) хисеплесе чĕнни. Еврейсен йăлипе Турă ятне сасăпа калама юраман, çавăнпа та Çырнине вуланă чухне вĕсем сĕм авалтан Турă ятне калас вырăнне Хуçа, Хуçамăр тенĕ. Çĕнĕ Халалра Иисус Христоса чылай чухне çак сăмахпа хисеплесе чĕннĕ, çапла майпа Вăл Турă Суйласа илни пулнине палăртнă.

**Чиркӳ** – ку сăмахпа Çĕнĕ Халалра икĕ пĕлтерĕшпе усă курнă: 1) пĕр-пĕр вырăнта пурăнакан, Иисус Христоса ĕненекен çынсен пухăвĕ, ушкăнĕ; 2) пĕтĕм тĕнчери христиансем. Хальхи вăхăтра «чиркӳ» тесе ĕненекенсем пĕрле кĕлтума, пуççапма пухăнакан Турă çуртне те калаççĕ.

**Шăмат кун** – еврейсен кун шучĕпе эрнери çиччĕмĕш, юлашки кун. Çак куна Турра халалланă, шăмат кун нимĕнле ĕç те тума юраман, шăмат кун йăли-йĕркине пăснăшăн çынна вĕлернĕ.

**Шыва кĕртекен Иоанн** – Захария священникпа унăн Елисавета арăмĕн ывăлĕ. Турă сăмах парса шантарнипе ятарлă ĕç тумашкăн çуралнă: Çăлакан килнĕ çĕре унăн халăха хатĕрлемелле пулнă. Иордан юхан шывĕн тавращĕнче вĕрентсе, Иоанн халăха ӳкĕнмешкĕн чĕннĕ, ӳкĕннине палăртмашкăн шыва кĕме ӳкĕтленĕ. Иоанн патĕнче шыва кĕрсе Иисус Хуçамăр шыва кĕрес (*Шыва/тĕне кĕни* сăмаха пăхăр) йăлана сăваплатнă.

**Шыва/тĕне кĕни** – тĕн йăли-йĕркисенчен чи пысăк пĕлтерĕшли. Ку йăлана тунă чухне шыва кĕртеççĕ, çакă çынна ĕненекенсен ушкăнне кĕртнине пĕлтерет. Çĕнĕ Халалра тĕне кĕртнин икĕ тĕсĕ çинчен каланă. Иоанн (*Шыва кĕртекен Иоанн* сăмаха пăхăр) шыва кĕртни çылăхран ӳкĕннине, хăвăн пурăнăçна Турă аллине панине пĕлтернĕ. Иисус Христос Хуçамăр вилнĕ тата вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă хыççăн шыва кĕни тата пысăкрах пĕлтерĕшлĕ пулса тăнă: çын малтанхи «эпĕ» тенине пăрахăçлать те, Христоспа пĕрлĕхлĕ пулса, çĕнĕ пурăнăçшăн чĕрĕлет. Çав çыннăн çылăхĕсем каçарăнаççĕ, вăл Святой Сывлăш парнине илет.

**Ытарлăх** – шухăша ытарлăн, сăнарлăн каласа пани. Ӳкĕтлесе вĕрентнĕ чухне Иисус Христос ытарлăхсемпе тăтăшах усă курнă.

**Этем Ывăлĕ** – чи малтанах çак сăмах çаврăнăшĕ еврейла «этем» тенине кăна пĕлтернĕ. Даниил пророк «Этем Ывăлĕ» тесе Турă Суйласа илнине каланă. Вăл килĕ те Израилĕн малтанхи аслăлăхне çĕнĕрен чĕртсе тăратĕ тенĕ (*Христос* сăмаха пăхăр). Пурте кĕтекен Турă Суйласа илни – Иисус – çĕр çине килсен Хăйне тăтăшах «Этем Ывăлĕ» тенĕ.